Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

58 (7698) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи июлĕн (утă) 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

«Ударник» хуçалăхри уй-хир кунĕнчен

Йӳçкассисем çĕр улмие манмаççĕ

Районти нумай ял хуçалăх производство кооперативĕнче кăçал çĕр улми çине ытларах тимлĕх уйăрни сисĕнчĕ. Пĕлтĕрхи çур акире районта «иккĕмĕш çăкăр» лаптăкĕ пин гектартан кăшт çеç иртнĕччĕ. Кăçал вара çав виçе тата 600 гектара яхăн ытларах пулчĕ. Çапла вара çĕр ĕçченĕ кăçал пĕтĕм тăрăшулăха «иккĕмĕш çăкăр» пуссине уйăрать. Муркаш енри 9 пĕрлешӳллĕ хуçалăхпа «ДаАн» тата «Картофель» агросоюз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем, 5 хресчен (фермер) хуçалăхĕ çĕр улмипе ĕçлессине мала кăларчĕ. Акă камсенчен тĕслĕх илмелле малашлăха пăхакансен!

Иртнĕ эрне кун, утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче, çĕр улми вăрлăхĕ туса илекен «Ударник» хуçалăхăн çĕр улми пуссисенче уй-хир кунĕ иртрĕ.

– Çак çĕнĕлĕхе эпир ытахальтен пуçламастпăр. Пирĕн çĕр улми вăрлăхĕпе ĕçлекенсем районта та, унăн тулашĕнче те пайтах. Анчах кăçалччен вĕсем эпир каланипе кăна вăрлăх туяннă пулсан, çак çултан пуçласа хăйсем кăмăллăнă вăрлăхсем пусăра епле ӳснине курса малашлăх планĕсем йĕркеленеме пултарччăр, – терĕ хире чĕнсе «Ударник хуçалăх ертӳçи П. Давыдов.

Çĕр улми тутлăхлă çеç мар, çителĕклĕ сывлăш кĕрекен кăпăшка çĕре юратать. Специалистсем çирĕплетнĕ тăрăх, çĕр улмишĕн çĕр сывлама пултарни нӳрĕк пуррипе танах. Çавăнпа та «иккĕмĕш çăкăр» çеçкисем 10-12 сантиметра çитсен вĕсене обязательнăй йĕркепе купалантармалла. Вăхăтра çумпа тата сăтăрçăсемпе кĕрешмелле. Халĕ каланисем вара Йӳçкассинче малти вырăнта тăраççĕ. Çавăнпа та сутлăхлă продукци ӳстерекен хирсенче те, çĕр улми вăрлăхĕ туса илнĕ çĕрте те «Ударник» хуçалăх ĕçченĕсем технологие çирĕп пăхăнаççĕ. Мĕнле сортсемпе, хăш технологипе ĕçлени, епле техникăпа усă курни пирки пухăннисене хуçалăх ертӳçипе пĕрлех тĕп агроном А. Албутов, çĕр улми вăрлăхĕн лаборатори пуçлăхĕ М. Романова паллаштарчĕç.

«Ударник» хуçалăхри уй-хир кунне ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ С. Павлов хутшăннипе пĕрлех ЧР çĕр улми ассоциацийĕн ертӳçи А. Капитонов, Голландири çĕр улми ăсти Вогелс Вананд хутшăнчĕç (**сăн ӳкерчĕкре).** Йӳçкассисен тăрăшулăхĕпе кашниех кăмăллă юлчĕ.

Вĕсем уй-хирте пуç усманни савăнтарать кăна. Малтуртăмлă вăй хурса вĕсем çĕр улмин пысăк тухăçлă «Удача», «Невский», «Луговской», «Елизавета», «Жуковский ранний», «Петербургский», «Любава» т. ыт. сорчĕсемпе ĕçлеççĕ. 200-300 центнер тухăç паракан çак сортсем уй-хир кунĕнче хăйсен пулас хуçисене тупрĕç теес килет.

А. БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Район аталанăвĕ: пĕрремĕш çур çул

Промышленность

Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта районĕпе продукци пĕтĕмпе 455896,5 пин тенкĕлĕх туса кăларнă. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 56,2 процент пулать. Вăл шутран ял хуçалăх продукцине 165837 пин тенкĕлĕх (98,7 процент), промышленность тата продукци тирпейлекен промышленность продукцине 290059,6 пин тенкĕлĕх туса кăларнă.

«Сундырь–Хлеб» предприяти продукци туса хатĕрлессине иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан 7,6 процент, Муркашри сĕт-çу завочĕ 9,6 процент, «Моргауши–Хлеб» предприяти 23,9 процент, Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх 28,5 процент, Çĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх 19,5 процент, «Моргауши-межрайгаз» филиал 15,9 процент, Муркаш почтамчĕ 22,6 процент ӳстернĕ пулсан, Муркашри кирпĕч завочĕ, «Сеспель» предприяти иртнĕ çулхи çав вăхăтрин 50 процентне те ĕçлесе çитереймен.

Районти промышленность предприятийĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинче пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕ палăрмасăр тăма пултараймасть.

Э. СИМАКОВА,
район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.

Кĕскен

200-мĕш ача çуралнă

Районти ЗАГС пайĕнче июлĕн 17-мĕшĕнче 200-мĕш ачана регистрацилене.

Давид ят панă хăйсен пепкине Ятман ялĕнчи Рена Владимировнапа Валерий Вячеславович Петровсем. Пĕчĕк ывăл çак çемьере иккĕмĕш ача.

Давид ят авалхи еврей чĕлхинчен куçарсан «юратнă» тенине пĕлтерет. Давид вара яланах юратнă çын пуласса шанатпăр.

Петровсене çак савăнăçпа саламлатпăр!

Вĕренӳ çулне хатĕрленеççĕ

Ачасем парта хушшине лариччен тепĕр уйăх. Районти шкулсем вара çĕнĕ сĕтел-пуканпа пуянланчĕç. 1 класра вĕренекенсем валли 774 пукан, 387 сĕтел, учительсене валли сĕтелпе пукан комплекчĕ пурĕ 64 килнĕ.

Пуçламăш классенче вĕренекенсем валли 2518363 тенкĕлĕх тĕрлĕ пособисем туяннă. Шкулсенче пурнăç хăрушсăрлăх никĕсĕ предмета вĕренме те малашне интереслĕрех пулĕ – 719169 тенкĕлĕх курăмлăх хатĕрĕсене часах кабинетсене вырнаçтарĕç.

Хамăр инф.

Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ

Заявлени кирлĕ пулмасть

Ĕçлекен пенсионерсем малашне Пенси фондне пырса пенси виçине çĕнĕрен шутлаттарма та, çак ĕçе заочно майпа туса ирттерме те пултараççĕ.

Раççей Президенчĕ Дмитрий Медведев 2009 çулхи июнĕн 30-мĕшĕнче «Раççей Федерацийĕнчи ĕç пенсийĕсем çинчен» Федераллă саккуна улшăнусем кĕртесси çинчен» 142-ФЗ № Федераллă саккуна алă пуснă. Саккунпа килĕшӳллĕн ватлăха, инвалидноçе тата çемьене тăрантаракан вилнине пула ĕç пенсийĕн страхланă пайне августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса Пенси фондĕнчи июлĕн 1-мĕшĕнчи даннăйсене кура ятарлă заявленисĕрех çĕнĕрен шутласа парĕç. Ку вăл пенси илсе тăраканăн счечĕ çине пенси шутласа панă хыççăн е унччен çĕнĕрен шутласа панă хыççăн куçнă страховани взносĕн сумми.

Пенси виçине августра çĕнĕрен шутласа парассине ĕç пенсийĕн страхланă пайĕн корректировки тесе ят панă. Корректировка валли заявлени çырма кирлĕ марри – ĕçлекен пенсионерсемпе пенси илсе тăракан ытти çынсемшĕн питех те меллĕ. Вĕсен счечĕсем çине страховани взносĕ хăех куçса тăрĕ. Чăваш Республикинче кăна пенси виçине çĕнĕрен шутлаттарма 50 пин çын ытла пырать, районĕпе вара 542 çын.

Асăннă саккунпа пĕрлех заявлени çырнипе пенси виçине çĕнĕрен шутласа памалли йĕркене те пăхса хунă. Кун пек чухне ăна пенси пама тытăннăранпа е пенси виçине çĕнĕрен шутласа панăранпа 12 уйăх иртнĕ хыççăн пăхса тухаççĕ. Çавна валли вара августри корректировка кирлĕ марри пирки заявлени çырас пулать.

Е. АЛЕКСАНДРОВА,
РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн ертӳçи.

«Дача амнистийĕ»

Татах 5 çуллăха тăснă

РФ Патшалăх Думи «дача амнистине» татах 5 çуллăха, 2015 çулхи мартăн 1-мĕшĕччен тăснă. Депутатсем пĕрремĕш вулавра, хыççăн вара пĕтĕмĕшле гражданссен уйрăм куçман пурлăхĕсене регистрацилессин йĕрки пирки калакан законодательствăна улшăнусем кĕртме йышăннă. Патшалăх Думин гражданла, уголовнăй, арбитраж тата процессуаллă законодательство комитечĕн председателĕ Павел Крашенинников палăртнă тăрăх, «дача амнистийĕн» тĕп тытăмĕсем 2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен кăна вăйра пулаççĕ. Анчах та регистрацилекен органсемпе вырăнти влаç органĕсем «дача амнистийĕн» саккунĕсене кирлĕ пек пурнăçламаннин проблеми нумай çынсене унăн положенийĕсемпе усă курма чăрмантарать.

«Дача амнистийĕ» гражданссен çĕр участокĕсемпе куçман пурлăх объекчĕсене регистрацилессин йĕркине чылай çăмăллатрĕ. Сăмахран, дача участокĕнчи куçман пурлăх объектне регистрацилеме халĕ пурăнмалли харпăрлăх объекчĕн техника паспорчĕ кăна (ун пирки çырса кăтартнипе пĕрле) кирлĕ. Çапла вара гражданссен нумай çул маларах тата хăйсен ирĕкĕпе çуртсем лартнин ыйтăвне татса панă. Кунпа пĕрлех уйрăм харпăрлăхри пурăнмалли çурт-йĕре хута яма ирĕк кирлĕ пулмасть. Унччен вара çакă ку объектăн техника учетне (инвентаризацине) тума кирлĕ пулнă. Çакă граждансене документсем хатĕрлессине ансатлатма кăна мар, йывăрлăхран тухма та май пачĕ. Мĕншĕн тесен унччен вăхăтпа вĕсем ку ирĕксене илме пултарайман.

«Уйрăм çыннăн çĕр участокĕсем тата пурăнмалли çуртйĕр тĕлĕшĕнчи харпăрлăхĕ рынок экономикин тĕп тытăмĕ тата обществăпа паттшалăха тăнăç аталанма май паракан «вăтам класс» шутне ӳстерме май паракан мел пулса тăрать. Çавăнпа та граждансене хăйсен пурлăхĕн правине çирĕплетессипе пирĕнтен мĕн килнине пĕтĕмпех туса пама тăрăшмалла»,– палăртнă П. Крашенинников.

Çанталăк ăшă тăрать пулин те

Хĕле хатĕрленсе

Нумай хваттерлĕ çуртсене кĕркуннехи-хĕллехи сезонта ăшăтма хатĕрлесси кирлĕ шайра пырать. Июль уйăхĕн çурри тĕлне çак ĕçсене тума палăртнă 51 çуртран 39-ăшĕнче туса ирттернĕ ĕнтĕ. Хальлĕхе ăшăтмалли системăн 36 процентне, шывпа тивĕçтермелли системăн 46 процентне юсанă.

Ăшă çу кунĕсемпе усă курса çуртсен çивиттийĕсене 3535 тăваткал метр юсанă. Планласа хунă 9 çуртран 7 çурт тавра отмостоксене çĕнетнĕ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Саламлатпăр!

Пирĕн юратнă, хаклă та кăмăллă çыннăмăра, хĕрĕме, аппана, йăмăка – Муркашра пурăнакан, пурнăçне суту-илӳпе çыхăнтарнă **Зинаида Алексеевна МИХАЙЛОВАНА** сумлă юбилей ячĕпе чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эпир эс пурришĕн савăнатпăр. Санăн ăшă та ырă кăмăлу пурне валли те çиттĕр. Ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе, тус-юлташусемпе савăнса пурăнма юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, тулли телей сунатпăр. Турри яланах вăй-хал парса тăтăр сана, юратнă тăванăмăр.

Саламлаканĕсем: амăшĕ, Углевсен пысăк çемйи тата Колесниковсем, Михайловсем.

Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра, аннене, кукамая,ватă кукама, мамака – Çеменкасси ялĕнче пурăнакан **Ефросиния Викторовна САДОВНИКОВАНА** 85 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Эсĕ – пирĕн пурнăç илемĕ, малашлăх ăраскалĕ. Эсĕ хамăрпа юнашар пулнишĕн савăнатпăр, татах нумай çул ырă-сывă пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр. Çывăх тăванусем сана яланах савăнăçпа телей парнелеччĕр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 14 мăнукĕ, 9 прамăнукĕ.

Пирĕн юратнă аттене, ырă кăмăллă асаттене – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Петр Исаевич ИСАЕВА** 75 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ырă кăмăлпа, тулли те çирĕп сывлăхпа, пуян кĕрекепе, хисеплĕ çемйӳпе, мăнукусемпе тата тăванусемпе санăн татах нумай çул пире савăнтарса пурăнмалла пултăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, тăхлачисем.